К-11

КАПКĂН 3-мĕш №

# Выçă хырăм.

Малтанах калас пулаť: пирĕн «Капкăн» чунлă йапала. Увăн куçĕсем те пур, хăлхи те пур, калаçма та пултараť. Епĕ унпа час та часах курăнса калаçатăп. Майăн 1-мĕш кунне кĕтсе илесси çинчен епĕ унпа пĕр ерне малтанах калаçса пăхрăм. Пытăм та ун патне, кулпуççийĕнчен çапса.. хулпуçийĕнчен мар—тимĕрункинчен çапса каларăм:

—Ну, Капкăн йулташ? Майăн 1-мĕш кунхи праçнăка пĕрлех иртерĕпĕри?...

Капкăн теменшĕн çиленчĕ,— ункисемпе шарт-шарт тăваť.

— Манăн мĕн çийес?—тесе ыйтрĕ ман ыйтăва хирĕç капкăн йулташ.

— Чутак, терĕм еп ăна хулпуççийе силлесе,—халĕ пирĕн 1921-мĕш çул мар—çимеллисем çителĕклĕ. Ун чухне чăнах та мĕн кирлĕ ăна пехилеткĕрчĕ... Майан пашалу, вилĕ шăршăллă контрреволĵутсионерсем, пантит кĕселĕ...

— Пр-р!..—тесе шăртланчĕ Капкăн, ункисем холт-холт турĕç.

— Епĕ те çавнах калатăп çав. Ун чухне пур шăршлă йапаласене те çийеттĕмĕр,—вилес килмест. Халĕ 24-мĕш çул тетĕп епĕ. Тутлă турамсем тупăнĕçха сан ваĵĵи, хе-хе хе!.. Ак илĕпĕр вçаткă илме йуратакана... самăртараххине, сăмакункăпа хутăштарсан, тата çийĕнчен уксус вырăнне пупăн таса шывне сапсан...

Капкăн кăна та йышăнмарĕ.

— Хăсас килет, терĕ.

— Вçатăшвикран хăсас килети?..—Хм... Ну, йурĕ. Апла пулсан копператтив йачĕпе сутă тăвакана ăшаласа çийĕпĕр. Вăл хăйне-хăй типшемрех те, анчах совет ухмахĕсен пуç мимипе хутăштарсан тутлă пулмалла...

— Курассăм та килмест вĕсене, терĕ хыттăн Капкăн тус.—Шăла кĕрсе ларсан тухма пĕлмеççĕ вĕсем.

Пуçа кăтăрт-кăтăрт хыçса илтĕм.

— Ну, тăванăм, ытла та есĕ иртĕнсе кайнă иккен. Мĕн çитерес ман сана? Совет майрисемпе совет улпучĕсем те сан карланкуна килĕшмĕç.

Капкăн йăвăрăн кулса илчĕ.

Есĕ мана йумăç карчăкĕсене çиме хушăттăнчĕ тата. Саншăн пулсан кам епĕ: пĕтĕм тĕнчери пролеттарисен праçнăкĕ умĕн те манăн тутлăрах çийес мари? Шăршлă какайа курмани мĕн епĕ!..

— Есĕ те ытла кутăнланса ан тăр тата,—терĕм епĕ тутана мăш туса.

— Есĕ те хыт кукар пулса ан тăр. Капкăн туйантăр та, есĕр ăна тăрантармасăрах усрас теттĕри? Есĕ кам пулатăн?

—Епĕи? Епĕ шурналист-хаçатра, ĕçлекен. Совет хаçатĕнче ĕçлетĕп. Епĕ мĕн.. Епĕ нимĕнех те мар... Есĕ... Мĕн есĕ ман çийе хайар куçпа пăхататăн?..

Капкăн шăлĕсемпе кăчăр-кăчăр!—туса илчĕ:

— Акă мĕн! Ман хырăм выçса карĕ, есĕ мана çыртăксемпе, мăшкăлтăклă йапаласемпе тăрантарасшăн. Санăн мĕн пуррине пурне те кăларса хур. Пĕр йапала та ан хăвар.

— Ну-ну-ну! Есĕ те пăрах шăлна кăчăртатма,—терĕм епĕ алăк патнелле шуса.—Санăн тĕпсĕр катка пек çăварна ăçтан тултарса çитерĕн?..

Капкăн татах шăлĕсене йĕрсе кăчартатса илчĕ.

— Лĕпĕртетсе тăрха есĕ кунта!.. Ман хырăм çийес килсен...

— Манăнваскавлă ĕç пур. Халех каймалла, тесе тухса тартăм Капкăн тус патĕнчен.

«Капкăна» çыракансем, Капкан тус пире пур йĕркесĕрлĕхсем çинчен те трук çырса пама хушаť. Пуринчен ытла çĕнĕрен тупса кăларнă йалсенчи ирсĕрлĕхсем çинчен çырнине пит йурататť вăл.

Йумах йуплĕ, çăварĕ кашкăр, тенĕ йумахăн туппине малалла „Капкăн“ темелле пулаť пуĵ. Йăван мучи.

## Нийепле те ӗненесшӗн мар.

Упрам мучи вӑрман касма кайнӑ, карчӑкне, сӑмакункка йухтарма тесе, киле хӑварнӑ. Вӑрмантан таврӑнаҳ те, тӗлӗнсех кайаҳ: сӑмакункка каткисем ўпӗнсе выртаҫҫӗ, пичкисем тулта йапӑхса выртаҫҫӗ, сӗтеллисем...

— Хуйхӑ пире, хуйхӑ!—тет арӑмӗ: есӗ килтен тухса кайсанах таҫтан масартан милитси килсе тӑчӗ!

— Мӗн есӗ? Апла пулма пултараймасҭ...

— Каснӑ лартнӑ милитсийех: ҫӗлӗкӗ те хӗрлӗ, револьверӗ те айӑккинче ҫакӑнса тӑраҭ, сасси те...

— Вӑл мӗн,—кирек кам та ун пек тумланма пултараҭ, тет Упрам Мучи ӗненмесӗр.

— Мӗн алла кӗнине пытарма ӗлкӗртӗм. Тӑрӑшни ахалех пулчӗ. Пур хатӗрсене те шыраса тупрӗҫ, каткисене ҫӗмӗрсе пӗтерчӗҫ...

— Тӗлӗнсе хытсах каймалла.

— Сӑмакункка 5 четвӗрт илсе карӗҫ, аппаратне те сӗтӗрсех карӗҫ...

— Тӗлӗнмелле!.. Ҫук, милитси пулман вӑл. Шулӗксем пулнӑ пуљ, йе сана усал курӑннӑ... Кайса ыйтӑпӑрха милитсирен.

Милитсийе пыраҫҫӗ. Епӗр никама та йаманҫке, теҫҫӗ милитсире.

— Курӑн—чӑн милитсийех пулман ҫав сан патӑнта. Ех, есӗ те...

Карчӑк тӗлӗнсе карӗ. Упрамран ыйтаҭ:

— Мӗнтен сисрӗн есӗ суйа милитси пирӗн пата пынине?

Упрам кулса йачӗ:

— Чӑн милитси сӑмакункка аппаратне тупма пултараймасҭ, каткасене те ҫӗмӗрес ҫук. Чӑн милитси епӗ сӑмакункка тунине ӗлӗкех пӗлет. Епӗ вӗсемпе килӗшсе ӗҫлетӗп. Ҫӑла ан сур, ӗҫес килсен кирлӗ пулӗ, тевине вӗсем лайӑх пӗлсе тӑраҫҫӗ.

— Ах, мур!..—Ах, шуйтан! Улталаниха вӑл мана, ҫӑва тӗппе кайман-скер!

Мак.

## Мӑнкун картинӗ-сем

### Шӑмат вулӑсӗнче.

Вулӑсӗпех, калама хӑйатӑп, урнӑ пек мӑнкуна ўсӗрпе иртерчӗҫӗ. Пур йалсенче те.

Йалкор Лаванов.




Хатӗрленеҫҫӗ.!




Кайран...

## 13 ҫулхи ача ҫырнӑ пӗчӗк калаҫу.

Пуп ачи.—Епӗ улӗм тем пулсан та пуп пулмастӑп.

— Ма вара, питӗ усали пуп пурнӑҫӗ?

— Аван мар ҫав. Мӗн унта мӑрланмӑрлан та, аран петак (5 пус) параҫҫӗ.

— Кам пулас тетӗн апла?

— Епӗ тимӗрҫӗ пулатӑп.

Тимӗрҫӗн пурнӑҫӗ аван вӗт—шак шак шаккатӑн та 1 тенкӗ пулчӗ те.

Пупӑн ачи те сахалпа тӑранасшӑн мар, нумайа хапсӑнаҭ!..

Уйӑп.

# Мăнкун мар, „канмалли кун".

Мăнкун умĕн ерне кун Иван Петровчă Совслушĕв почтăна кĕрсе тухас терĕ. Маркă илнĕ çĕрте черетре тăнă чух, çтена çинче пĕр пĕлтерӳ курах кайрĕ:

---

**Обратите внимание.**

Открыт прием досрочных поздравительных телеграмм Перед адресом таких телеграмм отправитель помещает следующую отметку:

**Досрочная вручить 20 апреля.**

---

Апрелĕн 20-мĕшĕ Ив. Петровчă шучĕпе калăм кунĕ пулмалла, çавăнпа вăл ку телекрамсене мăнкун пирки пĕлĕшсене савăнтарма йамаллине часах тавçăрса илчĕ. Хай шухăшне тĕрĕслес тесе, вăл пĕр слушăшчинчен ыйтаť:

— Каласа парăрха мана—ку телекрамсене Христос чĕрĕлнĕ йалĕпе йамаллаи? тет.

— Çук, терĕ слушăшчийĕ, хуť те мĕн йачĕпе йарсан та йураť, терĕ.

Ив. Петровчă çапах чарăнмасť: е, мĕншĕн вара унта 20-мĕш числара çитермелле тесе çырнă? тесе ыйтаť.

— Кайса ыйт начаљнĕкрен, ман санпа каласса тăма вăхăт çук, терĕ те слушăшчи, пăрт, çаврăнса ларчĕ тепĕр йеннелле.

Хм-м-м... Иван Петровчă та почтăран тухрĕ.

---

Шăмат кун Чăваш тĕп театтăрĕнче тĕне хирĕç токлатсем тăваççĕ. Халăх нумай пухăннă, пурте тенĕ пекех слушăшчисем. Ив. Петровчă та чылайчен токлатсене итлесе ларчĕ.

— Чăнах та турă çук пулмалла çав, тесе шухăшласа лараť. Ку шухăш ăна тата ытти шухăшсем патне илсе кайаť. Çапла шухăшласа ларнă май Ив. Петровчă çыврах кайнă. Тен, вăл çĕрĕпех çыврăрса ларнă пулĕчĕ, анчах халăхсем йăшăлтатнипе шартах вăранчĕ. Театтăрта халăх нумай та йулман—пĕрерĕн-пĕрерĕн туха туха утаççĕ. Иван Петровчă та уттараť.

---

Хулари чиркӳсем чан сассипе кĕрлесе лараççĕ. Иван Петровчă, киле кайнă май, хăйĕн начаљнĕкне хуса çитет,—вăл та театтăртан тухнă мĕн. Каласса кайаççĕ тĕрлĕ ĕçсем çинчен. Анчах Уçпени чиркĕвĕ тĕлне çитсенех начаљнĕкĕ Ив. Петровча ал параť те, сылтăмалла пăрăнма хăтланаť.

— Ес урăх хваттере куçнăим вара? тесе ыйтрĕ Совслушĕв хăйĕн начаљнĕкĕнчен.—Пирĕн хваттер пĕр урамрахçке.

— Çук... Çавăнта кĕрсе тухас, тетĕп.

— Ес турра ĕненместĕп, теттĕнçке?

— Хаљ те ĕненместĕп.

— Маха есĕ чиркĕве кересшĕн?

— Епĕ чиркĕве йурланине итлеме çӳретĕп...

— Хм м-м...

---

Килте Иван Петровча арăмĕ чей ĕçме лартаť. Сĕтел çинче туллийех ĕçме-çиме: куличсем, пасхăсем, темскер те пĕр пур.

— Ма есĕ çав тĕрлĕ нумай хатĕрлесе хунă? тесе ыйтрĕ Ив. Петр. арăмĕнчен.

— Ма тет, мăнкун вĕт, ухмах, тесе кулса йачĕ арăмĕ.

— Мĕнле мăнкун? мăнкун вăл пупсен праçнăкĕ, пирĕн тĕн сĕрĕмĕнчен тасалмалла, тет Ив. Петр. арăмне ӳкĕтлесе.

Анчах хĕрарăма часах ăнлантарас çук. Чей ĕçме те лартрĕ, çутгиве те сыптарчĕ, куличĕсене те çитерчĕ, пасхине те астивтерчĕ. Йулашкинчен мăнкун мĕнне те каласа пачĕ. Мăнкун мăнкунах иккен. Ăна ирттермеллех. Ерех те ĕçмелле, кулич та çимелле, чиркӳне те каймалла.

Йе турра ĕненекен тесе каласран хăрасан—мăнкунне „канмалли" кун темелле, чиркӳне йурăсем итлеме çӳреп темелле, пасхи çине Х. В. вырăнне çурлапа мăлатук тумалла, ерехне саккуна йуракан кратăслине анчах ĕçмелле, йе вăл сахалтарах пулсан пĕр пĕр тухтăртан ретсептпа çпирт илсен те йураť...

Çапла тусан мăнкуна тĕн праçнăкĕ пек мар, «ревољутсиллĕ» те ирттерсе йама пулаť.

— Хм м... Ĕмĕр пурăн—ĕмĕр вĕрен, иккен...

Патман.

# Йăван мучин кайăк карти.

## Сывăи, çăпаталлă хресченсем!

Çичĕ уй урлă, вăрмансем урлă сирĕнпеле ал тытагăп, Чăваш респуплĕк йачĕпеле сире салам йаратăп.

Чăваш ĕççыннисене курма пĕр карта тискер кайăксем пухрăм. Картине тимĕр решуткăлă турăм, хурал тăма паграка тытрăм.

Решуткă витĕр пăхăр—кашкăра курăр. Есĕр ăна палаттăр. Вăл Утиккассисем, Шурча вулăссем, Саккул Трихвăнĕ. Вăл кашкăра усал ĕçсемшĕн, йалкора хĕненĕшĕн, тĕрмене те хупвăчĕ (ун çинчен хаçатсенче çырвăчĕ). Йăпăлти йытта кĕрт çыртмасť. Суйлав прави çук пулсан та, суйланаť Саккул комиттета. Йăпăлти пăру ик ама ĕмет, Саккул Трихваӈ чухăнсене ĕмет.



Çак хăйамат—пулаť пекемот. Пит хăраť унтан манăн карчăк. Пекемот вăл Ахриккăри тискер кайăк, халĕ вăл Уравăш йалне куçнă, арман хуçи пулнă. Çав Терентÿк кулак хăй тарçине лак!—çăтса йанă. Тарçи Уӈкка йатлă пулнă. Кунĕн-çĕрĕн ĕçленĕшĕн, выçăллă-тутăллă пурăннăшăн укçа паплаmasť, тумтир туса памасť. Çийĕнчен Уӈккан тутрине парса йанă хăйĕн чаплă хăнине.

Усалăн ури уллă, Терентÿкăн тăваттă. Ытлашки урисене тапма ал туйи кирлĕ, ал туйипе пеме телекаткă кирлĕ.



Ак тата пăхăрха ик ерешмене,—кооператтив çунатти айне кĕрсе ларнă шулĕксем. «Капкăн» сисеймĕ. теççĕ пуӈ вĕсем. Ырă вырăнта ларса, тырăпа, хăмлапа суттус , ытла та шыçăнса кайнă мурсем. Шикли шикленнĕ, кĕрĕк пĕркеннĕ, тесе лăх-лăх-хăл кулса лараççĕ, чухăнсенчен мăшкăлаççĕ.

Пĕр ерешмен вĕлерсен, хĕрĕх те пĕр çылăх каçаť, теççĕ ваттисем; пĕр кулака сирпĕтсен вунă хут пурнăç йусанаť, теççĕ çамрăксем.



Кĕçĕн-Йелчĕкри, Патăрйел вулăсĕнчи ачасен çуртĕнче уллă йытă усраççĕ. Йыттисене пит лайăх пăхаççĕ, тутлă çитереççĕ. Тăвансем, шухăшлăрха—мĕншĕн йуратаççĕха унта çав йытăсене. Çурт пуçлăхĕ Корсакков мĕнле те пулсан йытăсемпе пĕр йăх марши?—шухăшласа илĕрха. Пĕр йăх пулсан, профсойус асăрха. Пĕр учрештенирех 7 тăвана ĕçлеттерме йурамасť.

Пайанлăха çитĕха. Тепĕр чух тата кăтартăпăр. Вăхăтлăха сыв пулăр!

Й ă в а н м у ч и мыскараçă.

## Капкăна çакланнисем.

— Çакăнта лартса пăхамха, мĕн те пулсан çакланĕ, терĕм те капкăна пĕр кĕтессе хутăм. Кĕтетĕп. Сасартăк капкăнăм, шарт! туса хупăнчĕ. Пăхатăп—пысăк кайăк—Йатман мучин Вăрнар и йалхуçайстви техĕнккăмĕ çакланнă. Е! ку кайăк йурĕха мана, тетĕп. Пыратăп, кайăкне тытма хăтланатăп. Çук, тытмалла мар! Йатман кайăкĕ йăлăнат̆: капкăнçă тус, ырă çыннăм, тархасшăн ан тытха мана, тăвас ĕççене малтан туса пĕтерем, тет.—Мĕн тумалла вара?—Техĕнккăм карташĕнче пĕç тĕпĕ таран тислĕк, клуп çумĕнче Мопплан тăвĕ çӳллĕш кирпĕч катăкĕсем выртаççĕ. çавсене тасатмалла; тата çитменнине çуртăри вăрлăхĕ çук, тупмалла, часрах йар, тесе тархаслат̆.
—Кай еппин, хăвăр хресченсене тислĕке уйа тăкмалла тесе вĕрентетĕр, хăвăр тумастăр, тесе кăларатăп капкăнран техĕнккăма. Вĕçтерчĕ шеремет...
—Урăх ан çаклан, терĕм...

Пăхатăп: виççĕн харăс капкăна çакланнă! Камсем вĕсем?—Ай йай-йай! Тискерри те, пысăкки те, пĕчĕккĕрехи те пур! Хăлхинчен тытса пăхатăп (мур пĕтертĕр пуçне)! Вăрнарти техниккăмри учитлĕ Иванов, хăй чăваш пулсан та чăвашла калаçма йуратман кайăк! Тепĕрне тытатăп—тепĕри хресченсене подђитсара сиввĕн пăхакан, «аслисене» йуратакан Тăвай вулăсĕнчи хвеђшăр Сапперăв! Виççĕмĕшне пăхатăп—Синерти (Елĕк вул.) „краснăй купса“ Енеçĕм Михађи!—Мĕншĕн çаклантăн тесен,—паттентсăр сутă тăвап, тесе йăвăшшат̆...

Тата тепре хурасха капкăна. Шарт! турĕ капкăнăм. Турханти вуламалли çурт, вуламалли çурт мар, шашкăлла выђама вĕрентекен çурт çакланнă!

Тата капкăна хуратăп. Е! Нурăс пасар хуçи, прохсойусран ыйтмасăр тарçă тытакан «ерешмен» Проккопи Соловйов!

— Шарт! Йулăшкинчен капкăна чăваш чунĕшĕн тăрăшакан, чăваш хресченне „çӳлти патшалăха“ кĕртес тейекен чăваш ерхерейĕсем: Тимахви, Кермăн, Хĕлимун çакланаççĕ. Мур пĕтермĕшсем! Капкăна кĕрсен те пĕр пĕринпе çапăçаççĕ. Пĕр-пĕрне „анахвĕмăпа“ ылханаççĕ...

## „Капкăн“ муçейĕ.



Ку сӳсмен Асса-касси вулăсĕнчи Карайри Çемен Унтрийĕнчĕ. Халĕ ăна йалсовечĕн претçегаттĕлĕ Ваççили Илйин хăратса туртса илнĕ, хăй тăхăнса çӳреме шутлат̆.



Ку—Кĕçĕн-Тайапари (Патăрйел у.) Макуç арăмĕн чӳречи. Унăн ĕлĕк кантăкĕ те пурчĕ. Йалсовечĕн членĕ (унта лекнĕшĕн савăнса) пĕр четьĕрт ерех ĕçнĕ хыççăн кантăкĕсем ванса пĕтрĕç.



Ку арчара Шупуçĕнчи (Упи вул., Çĕрпӳ у.) учитлĕ çтена хаçачĕсене пуçтарса усрат̆. Хăй çиччен çырнă саметкăсем тухса тарасран хăранă пирки питĕрсех хурат̆.

Ну пайан капкăна тĕрлĕ шăршăмаршăсем нумай çакланчĕç! Çитес ернере тата тытăпăр!

Капкăнçă.

# Хĕртнĕ пăшатанпа.

## Пăртак чарма йурамастĭши?

Исментер йалсоветчĕн çыруçи Хветĕр Павлăч икĕ кун хушши ÿсрĕ се ухмахланса çÿрерĕ Çитменнине пĕр çынна пођнитсана илсе каймаллах сийен турĕ.

Йалкор.




Хветăр Павлăч. Епĕ сана çак вунă кĕренке туртакан чышкăпа пĕрре çапсах лапчăтап... Мĕн? Хирĕç калаçатăни? Молчаĭ! Кам епĕ?! Ман çумра есĕ кăпшанкă анчах вĕт. Маĭ... Маĭ...

Хресчен (хăраса ÿкнĕ). Е... Е... Епĕ кăпшанкă мар, ĕпĕ çынçке...

Хветăр Павлăч. Молчаĭ!..

---

## Çил çунатлă лашасем.

Хăмпуç—Патăрйел вулăс пуçлăхĕ Остроумăв й. тумтир-кĕпе çĕлекен патне, Йĕпреç стантсине, йамшăк лашисене 5 хут чуптарнă. Хăнана кайас пулсан та, пасара кайас пулсан та йамшăк лашисемех асапланаççĕ. тесе çыраĭ пĕр йулташ.

Мĕскĕн лашасем, сирĕн Остроумăва хирĕç револютси тумалла. Есĕр тăват уралă. Ик урапа наĭ наĭ анчах туса йамалла Остроумăв пуçĕнчен.

---

## Светтуй шывпа суттăвакан.

Очкассинчи (Чăваш Сурăм вул.) тийечук Çмирнов Пурис кашни уйăхрах Упи вулăсĕнчен 30—32 витре сăмакункă илсе хайĕн прихут çыннисене сутса пыраĭ, тет Тави й.

Пĕр иртен-çÿрен çын çавна пĕлсен йал претçетаттĕлĕнчен ыйтнă:

— Сирĕн йалта претçетаттĕл пури?

— Пур.

— Комсомолĕссем пури?

— Пур.

— Вулăсра милитсионер пури?

— Пур.

— Вĕсен пуçĕнче пуç мимисем пури? Ма чармаççĕ вĕсем.

— ?!

Çак ыйтăва хирĕç калама претçетаттĕл сăмах тупайман.

---

## „Илйе Мурăмтсă".

Ĕлĕк Илйе Мурăмтсă йатлă паттăр çын пулнă. Ăна çĕнекен никам та пулман. Йумахра каланă тăрăх, вăл пĕр тутара хăрах пĕççинчен тытса пĕтĕм хура халăха çапса, хĕнесе пĕтернĕ. Халĕ çавăн пек паттăрсем чăваш йалĕсенче те çурала пуçларĕç. Ку Вăтакасри (Карач вул., Шуп. у.) РКП кăнтитачĕ Нимаков йулташ. Вăл халăх пухăвĕнче халăха çапла вĕрентет: есĕр, халăх, комсомолĕссем çине çилленсе пурнатăр пулсан, «есĕ комсомолĕс» тесе ан хĕнĕр, апла хĕнесен хăвăра лайăх пулмасĭ, ĭÿрех ним сăмах чĕнмесĕр çапса ÿкерĕп Мана хуĭ хĕнес çук, епĕ никама та маххă парас çук, комсомолĕссене ĕнтсен те пыраĭ тет.

Çапа пĕлмен пушă хайне çавăрăнса тивнĕ пек, капкăна лексен, ури хуçăлса вăйĕ пĕтмĕши?

Шăрт.

## „Çын" вити.

«Канашăн» йалхуçайстви кĕтессинче çырнă статйасен усси пит нумай. Анчах вăл статйасене «Йетинствă» хапрăкĕнчи слушăшчисем урăхла тăнлаççĕ иккен. „Йĕп хулă" çыраĭ:

„Слушăшчисем хăйсем пурăннă хваттерсенче сысна çурисем, качака такисем, пăрусем усраса шăршлантарса йачĕç хваттерсене", тет.

«Выђăхсене савакан телейлĕ» тенĕ те пупсен йеванкĕлинче, пирĕн йеванкĕли тăрăх, выђăх витинче пурăнакан çынсене те хĕрхенмелле.

## „Турӑ ҫурчӗ“.

Йетӗрне уйесӗнчи 20-мӗш участкӑри страхакӗнт кӑнчелерӗнче тӑп тулли икконсем ҫакӑнса тӑраҫҫӗ. пурин умӗнче те йӑвӑҫҫу ҫунса ларать, тет йалкор.

Пӗр пӑлхар ҫынни акӗнт патне ӗҫпе килнӗ те, йӗри-тавра пӑхкаласа: учрештенисене икконсем кӗртеҫҫех пулас, унсӑрӑн май килмест витнӑ, тет.

— Кӗртетпӗрех ҫавӑ, унсӑрӑн май килмест, атту антихриссем килсе укҫи мӗнӗпех сӗтӗрсе кайӗҫ, вара сирӗн страховккӑ укҫи так пӗтет, капла хӑть кӑнчелер хӑчӗ те пур, комунсен пек мар. Укҫи те тӗрӗс выртать, терӗ тет акӗнт.

Ку акӗнта Оплӑҫри страховккӑ управленин тасарах „турӑ ҫурчӗ“ тупса памалла марши? Сӑнчас.

——

## „Херувим“ пуҫлӑхӗ.

Чӑршкасси шкулӗнчи (Хурамал вул.) учиттӗлнитсӑ кашни праҫнӑкрах чиркӳве йурлама ҫӳрет, тет. ПИҪЕН.

Улмуҫҫинчен улми катана ӳкмест, теҫҫӗ ваттисем. Ҫавӑн пек шкул ачисем те учиттӗлнитсӑ йурланине илтсе пӗчӗккӗн „ише херувим“ мӑкӑртатма вӗреннӗ. Ачисенчен ашшӗ-амӑшсем вӗрене пуҫланӑ. Вӗсенчен тата пӗтӗм йал, йалтан пӗтӗм вулӑс вӗренсе кайӗ ку ӗҫе.

Ку „херувим“ пуҫлӑхне йурланӑран сас параппанӗ ҫурӑлса кайасран хӑтармалла. ШӐРТ.

——

## Сысна—пӗтермӗш.

«Йетӗрне хули ҫывӑхӗнчи сыпной пункт пуҫлӑхӗ—ентри Ив. Вавилӑв йалканашӗсене ӗлӗкхи йанралсенчен те хӑрушӑрах приккассем па ать. Сӑмахран, Корски йалканашне: сыснӑрсене сыпн. пунктала йарас пулсан кашни пуҫран 5 тенкӗ штрах, тесе приккас панӑ». Хурҫӑ.

—«Кӗшӗл-кӗшӗл, кӗш-кӗш-кӗш..
Куллен ирхине
Сысна кӗтӳ—пӗтермӗш
Сыпной пункт патне.
Куҫ кӗретех кышласа
Миххе шӑтарать,
Тип ыраша йухтарса
Чӑмлать те чӑмлать.
Тӑрӑпши те хӑтлаймасть
Асав шӑлсенчен;
Ех, мӗн тӑвас, мӗн курас
Ку есрелӗрен»?..
Ҫапла вӑрӑм. шухӑшпа
Ентри тӗлӗрет,
Ҫӗрӗн кунӗн пуҫӗнче
Сысна хӗвӗшет.
Ӑнсӑртранах хайхискер
Иртнӗ кун ҫула
Аса илсе (чӑтса тӑр)
Калать ак ҫапла:
— Нумай пуҫа ҫӗмӗрмӗп
Ҫак йӗрӗнчӗкпе,
Ентри камне пӗлтерӗп
Пӗтӗм Оплӑҫне?
Унта чарӑлтаттарса
Шурӑ хут ҫине
Шӑратать ҫак приккаса
Корски канашне:
— Камӑн сысни пайантан
Килсе ҫапӑнать,—
Пилӗк тенкӗ вӑл ҫынтан!
(Михӗ саплавать).
Кӗшӗл-кӗшӗл, кӗш-кӗш-кӗш
Сысна кӗтӗвӗ—
Ӗлӗк тырӑ пӗтермӗш,
Хаҫ укҫа ҫапӗ.
Ҫиппӑтти.

## Вӑрман касаҫҫӗ.

Патирекпе Мишер Сӑкӑчӗ хушшинче (Пат. у.) 3—4 ҫул кайа вӑрман вӑрманаччӗ. Халӗ ҫап ҫутӑ. Вӑрман хуралҫисем ҫывӑраҫҫӗ. Патирек пакши.



Вӑрман вӑрлакан. Вӑрман хуралҫи ҫывӑрнӑ чухне лайӑхрах йӑвӑҫне касасха... Ҫывӑрса тӑрсан шертисене суйлӑпӑр .. Шертесемпӗн хуралҫӑ тивмест. Хамӑр хурӑнташах вӗт... Мӗн пире? Тӗттӗм вӑрмана ҫутатас...

# Четвĕрт шыв налокран хăтарчĕ.

Кам ку. Ахтомопиђ пек вĕҫтерсе килет, тесе урамалла чӳречерен пăхса ларат̆ налук инҫпектăрĕ.

Е-е-е, ку Пути Ҫтаппанĕҫке, терĕ ҫак инҫпектăр. Хăйĕн хваттерĕ патне ҫите пуҫласан.

— Ку навернă шалăпăпа йе налук пирки ҫăмăллăх илме килет пулмалла. Пайан лекмевчĕха сыпмалли. Карланкă типсех кайвăчĕ.

Пути Ҫтаппанĕ те ҫитрĕ.

— Сывă пурнатни Иван Ехвимчă?

— Сывăха, аван пурнатпăр. Есĕ мĕн ĕҫпе килнĕчĕ вара?

— Епĕ санран ҫăмăллăх ыйтас тетĕп... Мана налукран хăтармăнши есĕ? Епĕ сана уншăн ахађ тумăп, пĕр четвĕрт...

Инҫпектăр килĕшрĕ.

Хут ҫине ҫырса пачĕ:

„В сельсовет.

гр. Степан Путин освобождается от налога“...

Ҫтаппан илсе чикрĕ хутне. Кайран вара хутаҫран туртса памаллине кăларса пачĕ, хăй часрах тухса вĕҫтерчĕ. Леш четвĕрте пăхса чĕлхине икĕ айкинелле йарса ҫуланкаласа ларат̆.



— Ну ĕҫетĕп ĕнтĕ пайан. Тытрĕ те ĕҫе пуҫларĕ. Анчах пĕрре сыпрĕ те чарăнчĕ. Ерех вырăнне Ҫтаппан шыв тыттарса хăварнă—мур.

Ҫапла вара Пути Ҫтаппанĕ пĕр четвĕрт шывпа налукран хăтăлчĕ.

Ваҫук.

# САТАЧĂСЕМ.

1. Пĕр Совет улпучĕ мăнкунăн пирвайхи кунĕнче 25 путылккă хĕрлĕ ерех пĕтерне. Миҫе пичке ерех пĕтĕрĕ вăл ҫулталăк хушшинче? (ҫулĕ высокоснăй ҫул)?

2. Иртнĕ ҫумăрта 1 ҫын театтăртан Комунпайĕн мунчи патне ҫитичен 1 калуш ҫухатнă. Театтăртан муђчана ҫитичен 4 чалăш. Миҫе калуш ҫухалĕ увăн муђчаран Пролеттарлă ҫырмана ҫитичен (250 чалăш хушшинче)?

3. Чăваш Тĕп театтăрĕ 10 уйăх хушшинче ҫĕнĕрен хатĕрленсе (чăвашла чĕлхепе) $1^1/_2$ пйессă лартса кăтартрĕ. 1) Миҫе пйессă лартма пултарат̆ вăл 3 ҫул хушшинче? 2) миҫе ĕмĕртен сывалма пултарат̆ вăл хăйĕн чирĕнчен?

4. Комунпайĕ Хĕрлĕ плошчăгри ҫур аршăнлă навус куписене $1^1/_2$ уйăх пахаласа усрарĕ. Миҫе уйăх пăхса усрĕ вăл хула тулашĕнчи 1 чалăшлă купасене?

5. Пирĕн оплăҫа ҫулталăк хушшинче 3 ерхели килсе вырнаҫрĕҫ. Миҫе ерхелейе ҫитĕ 10 ҫул ҫурă хушшинче?

Из.

# „Капкăн“ тусĕсен ҫырăвĕсем“.

Йĕп йулташ ҫырат̆:
— „Капкăн“ пичe, сывăи,
Ҫакланаҫҫи кайăксем?
Айăккăн иртсе тармаҫҫи
Упа, кашкăр, тилĕсем?
Йăван мучи, авани,
Вăлту аван ĕҫлети? тет.

— Аванха, „Йĕп“ тус. „Капкăн“ правус пекех вăйлă ĕҫлетха, Йăван мучу те сывахха. Манăн халĕ йĕкехӳре, тилĕсем, ытти ула-чăласем, кив тĕнчĕнĕн чĕпписем вађђи тутанмаллăх капкăн та пур, вăлтам та пур, тем хăйамачĕ те пур. Есĕр пире пулăшсан, «Канаш» илме ҫырăнсан, тен хамăр «Капкăна» кашни ернерех кăлармалла тăвăпăр, ун ӳтпĕвне те мăнтăрлатăпăр.

Йăван мучи.

Чувашоблит № 1096. Чебоксары, Тип. Чувашиздата.